1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи
Н.В.Никольский
(1878–1961)

15 /26421/ № Ытлари кун, 2014, кăрлач (январь), 28 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пĕтĕмлетнĕ

***Кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Правительствин членĕсемпе, влаçăн территори органĕсен тата муниципалитетсен ертўçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илў министрĕ Владимир Аврелькин республикăн 2013 çулхи социаллă пурнăçĕпе экономикин аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарнă. Отчетлă тапхăрта строительство ĕçĕ, хута янă çурт-йĕр калăпăшĕ, ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕ, тўлевлĕ пулăшу, номинал тата чăн ĕç укçи, халăхăн укçа тупăшĕ ўснĕ.

Промышленноç производствин индексĕ 2013 çулта 5% чакнă. Тĕп сăлтавĕ – çулталăк пуçламăшĕнче машинăсем тăвакан отраслĕн продукцине сахалрах ыйтма пуçлани. Çав вăхăтрах электрооборудовани, электрон тата оптика оборудованийĕн отраслĕсенче ўсĕм палăрать.

Промышленноç комплексĕн организацийĕсем 146 млрд тенкĕлĕх хăйсем туса кăларнă тавара ăсатнă, тĕрлĕ ĕç пурнăçланă тата пулăшу ĕçĕсем панă. Республикăри промышленноç предприятийĕсенчен 31-шĕ ăсатнă продукци калăпăшне млрд тенкĕрен те ирттернĕ /2012 çулта – 27 организаци/. «Элара», «ВНИИР» АУОсенче, «ЭКРА» НПП, «Бреслер «ИЦ» ОООсенче, «ШИЗСА», «КАФ» акционерсен обществисенче, «Август» фирма» акционерсен обществин «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» филиалĕнче, «АККОНД», «Букет Чувашии» акционерсен обществисенче ўсĕм уйрăмах пысăк.

2013 çулта тĕп капитала хывнă инвестицисен калăпăшĕ 64,6 млрд тенке яхăн е 2012 çул шайĕнчен 93,5%.

Иртнĕ çул ялсенчи тавар туса кăларакансемшĕн уйрăмах кăткăс пулнă. Çанталăк çав тери шăрăх тăнипе акнă лаптăксен 36,5 пин гектарĕ пĕтнĕ, тыр-пул пухса кĕртнĕ вăхăтра çумăр тăтăш çунипе палăртнă тухăçа пухса кĕртме май килмен. Çавна пулах ял хуçалăхĕнче тата мĕн пур категорири хуçалăхсенче 2013 çулта продукци туса илнин калăпăшĕ 89,3% танлашнă.

Чăваш Енре 2013 çулта уйăхри вăтам ĕç укçи 19726 тенкĕ пулнă, 2012 çулхинчен 14,8% ўснĕ.

2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне ĕç укçи енĕпе парăм 2,9 млн тенкĕпе танлашнă, 2013 ç. кăрлачăн 1-мĕшĕнчипе танлаштарсан 26,8 млн тенкĕ /90,2%/ чакнă. Чăваш Ен çак кăтарту тĕлĕшпе федерацин Атăлçи округĕнче тăваттăмĕш вырăнта.

Ĕçлев рынокĕнче те лару-тăру япăх мар. Регистрациленĕ ĕçсĕрлĕх шайĕ 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçлеме пултаракан вăй питти ўсĕмри çынсен йышĕн 0,73% танлашать /2013 ç. кăрлачăн 1-мĕшĕнче – 0,84%/.

2013 çулта Чăваш Республикинче инфляци шайĕ 6,3% пулнă.

ЧР финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Фарида Муратова республика бюджетне мĕнле пурнăçланине пĕтĕмлетнĕ. Чăваш Енĕн пĕрлехи бюджетне 2013 çулта тупăшсем енĕпе 43079,2 млн тенкĕлĕх пурнăçланă /палăртнин 100%/, 2012 çул шайĕнчен ўсĕм 7,4% танлашать.

Хамăрăн тупăш – 27921,9 млн тенкĕ, 2012 çул шайĕнчен ўсĕм 9,2%.

Чăваш Республикин патшалăх парăмĕ çулталăк пуçламăшĕнче 9827,1 млн тенкĕ пулнă, çакă пĕлтĕрхи çулталăк пуçламăшĕнчи парăмран 381,5 млн тенкĕ сахалрах.

Муниципалитет районĕсемпе хулисен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ хутса ăшăтмалли тапхăрта еплерех ĕçлени çинчен строительство министрĕ Олег Марков каласа кăтартнă.

Хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланнăранпа пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата топливăпа энергетика комплексĕн предприятийĕсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Республикăри хуласемпе районсенчи пурăнмалли çурт-йĕр фондне коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе туллин тивĕçтереççĕ. Çак сезонта шывпа тивĕçтерекен объектсенче – 19, электроэнерги парса тăракан объектсенче – 2, ăшăпа тивĕçтерекен объектсенче 2 авари пулнă, кăлтăксене вăхăтра пĕтернĕ.

Республика Пуçлăхĕ ăшă парса тăрассин калăпăшне тĕрĕслемеллине палăртнă: халăх ўпкелешни ан пултăр. Управляющи компанисен ĕçне те тĕрĕслесех тăмаллине аса илтернĕ.

**А.ВАСИЛЬЕВА**

*Чыслав*

## «Эсир – паттăрлăх символĕ, мăнаçлăхĕ...»



cap.ru сайчĕн сăн ўкерчĕкĕ

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин юлашки залпĕсем тахçанах кĕрлесе иртнĕ ĕнтĕ, анчах фронтовиксен тата тыл ĕçченĕсен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ, сутă тĕллевшĕн хăйсене хĕрхенменни ĕмĕр-ĕмĕр вун-вун ăру асĕнче пулĕç. Тĕнчене кисрентернĕ иккĕмĕш тĕнче вăрçин историйĕнче Сталинградпа Ленинград хулисен тата унта пурăнакансен вышкайсăр паттăрлăхĕпе вилĕмсĕрлĕхĕ уйрăммăн çырăнса юлнă.***

Акă Нева çинчи хулана нимĕç фашисчĕсен блокадинчен тĕппипех хăтарнăранпа 70 çул çитрĕ. Сахал мар вăхăт ку. Чăтма çук тапхăра хăйсем тўссе ирттернĕ, Волхов тата Ленинград фрончĕсенче тăшмана хулана кĕртес мар, ăна ункăран хăтарас тесе çапăçнă çынсем пирĕн хушăрах пурăнаççĕ.

Нева çинчи хулана тăшманран тасатнăранпа 70 çул çитнине халалласа çĕршывĕпех савăнăçлă тĕрлĕ мероприяти иртет. Чăваш Ен те фронтпа тыл ĕçченĕсен вилĕмсĕр паттăрлăхне чыслать. Ĕнер Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вăрçă вăхăтĕнче Ленинградра çуралнисене, çак хулашăн хăйсене шеллемесĕр тăшманпа çапăçнисене, унăн ункине татса Нева çинчи хулана ирĕке кăларнисене Правительство çуртĕнче йышăнчĕ. Санкт-Петербург хулин ертўлĕхĕ вĕсене пурне те кăкăр çине çакмалли «Ленинград хулине фашистсен блокадинчен пĕтĕмпех ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа» паллăпа наградăлама йышăннă.

– Çак тивĕçе пурнăçласси маншăн питĕ пысăк чыс, – терĕ Михаил Васильевич пухăннисене сумлă юбилейпе саламланă май. – Эсир – паттăрлăх символĕ, мăнаçлăхĕ. Пĕтĕм йывăрлăха чăтса ирттерсе фашизма çапса аркатма пултартăр, çĕршыва хўтĕлесе хăвартăр, Европăна ирĕке кăлартăр. Эсир хăватлă тăшмана тĕп тунă, халĕ пирĕн ăру, килес ăрусем хамăрăн паттăрла историпе мухтанма тата мăнаçланма пултараççĕ...

Вĕсем çамрăк мар ĕнтĕ, тăнлавĕсем тахçанах кĕмĕлленнĕ. Мăнуксемлĕ пулнă. Хăш-пĕрин мăнукĕсен ачисем те çут тĕнчене килнĕ. Владимир облаçĕнчи Меленки хулинче çуралнă Елена Бурцевăпа Юлия Елимова /аппăшĕпе йăмăкĕ/ çав тапхăрти терт-нушана ачаллах чăтса иртнĕ. Вĕсен çемйи Ленинград облаçне куçса кайнă чухне Елена Яковлевна 10 çулта, Юлия Яковлевна çут тĕнчене çеç килнĕ пулнă. Вăрçă пуçлансанах ашшĕ фронта тухса кайнă, амăшĕпе ачисене Ленинграда куçарма ĕлкĕрнĕ. Тăшман Нева çинчи хулана унка çавăрса илсен выçăпа вĕсен икĕ пиччĕшĕпе аппăшĕ вилнĕ. Елена Яковлевнăна амăшĕпе пĕрле Шупашкара эвакуациленĕ, Юлия Яковлевнăн çулĕ Куйбышев хулине /хальхи – Самар/ выртнă. Вăрçă хыççăн пĕр-пĕрне шыраса тупнă. Юлия Яковлевнăпа Елена Яковлевна 40 çул ытла Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче тăрăшнă, иккĕшĕн те «Блокадăри Ленинградра пурăнакана» паллă пур. Чăваш Ен Пуçлăхĕн аллинчен илнĕ паллă вара асра та пулин çав вăхăта тепĕр хут тавăрчĕ пулас: иккĕшĕн те йывăр куççуль тумламĕсем пичĕсем тăрăх шурĕç.

Шупашкарта çуралса ўснĕ Александр Зимин вăрçа Ленинград çывăхĕнчи 8-мĕш телеграф полкĕн 550-мĕш çыхăну батальонĕн йышĕнче кĕнĕ. Стрелоксен 110-мĕш корпусне çыхănупа тивĕçтернĕ. 1943 çулхи раштавранпа 1944 çулхи кăрлач уйăхĕ вĕçлениччен малти линире çапăçнă, каярахпа Выборг хулине, Латвине, Литвана, Эстоние, Румыние ирĕке кăларнă. Паттăрлăхшăн II степень «Тăван çĕр-шыв вăрçи» ордена, «Ленинграда хўтĕленĕшĕн», «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн», «Паттăрлăхшăн» тата ытти медале тивĕçнĕ.

Çак кун «Ленинград хулине фашистсен блокадинчен пĕтĕмпех ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа» палла 25 çыннăн илмеллеччĕ. Шел, Ленинградра çуралнă, Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Станислав Щемелева чыслава килме чир чăрмантарнă. 1943 çулта эвакуаципе килнĕ 5 çулти тăлăха Шупашкар хули çывăхĕнчи ялти пĕр хĕрарăм усрава илнĕ. Ўссе тĕреклленсен Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă. Ун хыççăн промышленноç предприятийĕсенче 42 çул ĕçленĕ. Мăшăрĕпе икĕ ача çуратса ўстернĕ. Халĕ ватăсене мăнукĕсемпе вĕсен ачисем савăнăç кўреççĕ.

Юбилей паллине илнисене ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов тата республика çар комиссарĕ Александр Мокрушин полковник ăшшăн саламларĕç, çирĕп сывлăх сунчĕç. Оперăпа балет театрĕн артисчĕсем вĕсен ячĕпе вăрçă вăхăтĕнчи юрăсене шăрантарчĕç.

**Юрий СТЕПАНОВ**

*ЧР Пуçлăхĕн парнисемшĕн*

## Йĕлтĕрçĕсем сивĕрен хăрамаççĕ

***Канмалли кунсенче çанталăк сивĕ тăчĕ, çапах та спортпа туслисемпе сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем йĕлтĕр çине тăма шикленмен. Ветерансем тата çемьесем Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртусене хутшăннă.***

Спорт çемйисен хушшинче иртнĕ турнира Михаил Игнатьев тата унăн мăшăрĕпе ывăлĕ хутшăннă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ старта тухакан ашшĕ-амăшне ачисене спорта юратма вĕрентсе ўстернĕшĕн тав тунă. «Спортпа туслă çын вăйлă та хастар, пур йывăрлăха та çĕнтерме пултарать. Çавăнпа кашнин ачаранах сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнмалла. Сывă ўтре – сывă чун тенине яланах асра тытасчĕ», – палăртнă Михаил Васильевич.

Ăмăртура пурĕ 23 çемье тупăшнă. Чи малтан старта ачасем тухнă, вĕсем 500 метр чупнă, унтан амăшĕсем 1000 метрлă дистанцие парăнтарнă, ашшĕсем – 2 çухрăма. Пĕрремĕш ушкăнра финиша чи малтан Шупашкарти Ишуткинсем, Васильевсем тата Красновсем çитнĕ. Тепĕр ушкăнра Çĕнĕ Шупашкарти Васильевсемпе Маркидановсем тата Шăмăршăри Антоновсем пуринчен те пултаруллăрах пулнă. Виççĕмĕш ушкăнра тăватă çынран тăракан çемьесем вăй висçнĕ. Унта иртнĕ çулхи çĕнтерўçĕсем – Трак тăрăхĕнчи Кусковсем – пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă. Иккĕмĕш вырăнта – пĕлтĕр хĕллехи ял спорт вăййисенче палăрнă Мусьтаковсем /Йĕпреç районĕ/.

Ăмăртăвăн иккĕмĕш кунĕнче йĕлтĕр çине 120 ытла спортсмен тăнă. Яшсемпе хĕрсем, арçынсемпе хĕрарăмсем, ветерансем медальсен 12 комплекчĕшĕн тупăшнă. Хăйсен ушкăнĕсенче Шупашкар районĕнчи Джамилия Барановăпа Николай Федоров, Шупашкарти Наталия Кузьминапа Александр Антонов, Канашри Сергей Павлов, Куславкка районĕнчи Юрий Мануйлов тата ыттисем палăрнă. Çĕнтерўçĕсемпе призерсене республика Пуçлăхĕн парнисемпе, Чăваш Ен сиволикиллĕ сехетсемпе чысланă.

**А.МИХАЙЛОВ**



## Çамрăксем пирки – ырри кăна

***Кăрлачăн 24-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çамрăксен проекчĕсен «СтуДень» ярмăрккине хутшăннă, вăл, Раççей студенчĕсен кунне халалланăскер, ЧР Вĕрентў институтĕнче иртнĕ.***

Республика Пуçлăхĕ çамрăксен обществоне пĕрлешĕвĕсен хастарĕсене уяв ячĕпе саламланă, пуçарулăхшăн, тĕллевсене пурнăçлама ăнтăлнăшăн тав тунă. «Волонтерсен ĕçĕ-и, обществăшăн пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçласси-и – пирĕн çамрăксем кирек мĕнле проекта хутшăнсан та сирĕн пирки ырă сăмахсем çеç илтетĕп. Çакă питĕ кăмăллă. Эпир сире ĕненетпĕр, сире шанатпăр. Республика, Раççей пуласлăхĕ шăпах çамрăк ăруран килет», – тенĕ М.Игнатьев студентсене пурнăçра хăйсен выранне тупма, чуна çывăх професси суйласа илме тата çирĕп çемьесем çавăрма суннă май.

Студентсене çавăн пекех ЧР вĕренў министрĕ Владимир Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Петр Краснов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламланă.

Çак кун çамрăксене, студентсене пултарулăхри ăнтăлушăн ятарлă стипендисемпе хавхалантарнине ĕнентерекен свидетельствăсене Универсиада волонтерĕсене, Олимп çулăмĕн эстафетине хутшăннисене, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçăн общество организацийĕсен нумай представительне панă. Сăмах май, республика Пуçлăхĕн стипендийĕсене 2014 çулта вĕренўре, бизнес-проектсем тăвассинче, наука, пултарулăх, управлени ĕçхĕлĕнче, производствăра çитĕнўсемпе палăрнă 1000 яшпа хĕр илет. Стипендиатсен йышĕн 60% – вĕренекен çамрăксем, 8% ытла – общество пĕрлешĕвĕсен хастарĕсем, 32% – промышленноçри, ял хуçалăхĕнчи, вĕрентўри, культурăри тата ытти сферăри çамрăк специалистсем.

**К.АНДРЕЕВ**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Канаша çитсе курнă

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров Канашри «Локомотив» физкультурăпа спорт керменне çитсе курнă.***

Унта «КЭС-БАСКЕТ» баскетбол лигин чемпионачĕн зонăри тапхăрĕ иртет. Район-хула ăмăртăвĕсенче мала тухнă хĕрсемпе каччăсен командисем федерацин Атăлçи округĕн тапхăрне хутшăнассишĕн тупăшаççĕ. «Чемпионат яшкĕрĕмпе хĕр-упраçа спорта явăçтарма, пултаруллă спортсменсене тупса палăртма пулăшать. Çавăн пекех округра иртекен «Туриада», «Зарница», «Гвардеец» проектсене те чылай çамрăк хутшăнать», – палăртнă тĕп инспектор.

Аса илтеретпĕр: баскетбол чемпионачĕ РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич пуçарнипе иртет.

**А.ПЕТРОВ.**

### Культура çулталăкне уçрĕç

***Трак енре Культура çулталăкне уçнă ятпа савăнăçлă уяв иртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков Красноармейски ял тăрăхĕнчи информаципе культура центрĕн ўнерçине Александр Казакова чысларĕ.***

Вăл ЧР Культура министерстви ирттернĕ Культура çулталăкĕн республика эмблемин чи лайăх эскизĕн конкурсĕнче мала тухнă. Газ уçлакансен «Заволжский» клубĕн илемлĕх ертўçи Михаил Дмитриев «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Культура çулталăкĕнче районта вун-вун тĕрлĕ мероприяти иртмелле. Красноармейскисене Чăваш Республикин конкурент политикин тата тарифсен енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертўçи Альбина Егорова, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов, «Трак ен» ентешлĕх ертўçи Алексей Львов, район пуçлăхĕ Владимир Григорьев наци культурин аталанăвĕшĕн малашне те тăрăшма ырă сунчĕç.

**В.ДАНИЛОВ.**

### Паллашăр: «Анатри чăвашсен этнографийĕ»

***Аваллăхсăр, иртнине пĕлмесĕр культурăна аталантараймастăн. Тымарсăр йывăç та типет.***

Анатри чăвашсен культури, йăли-йĕрки питĕ хăйне евĕр. Ялсенче ватă çынсем ĕлĕкхи япаласене, ĕç хатĕрĕсене, кĕпе-тумтире паянхи кунччĕнех упраççĕ. Çи-пуç чăваша сивĕрен, усал-тĕселтен кăна упраман, çын мĕн ĕçлесе пурăннине, мĕнле йăхран пулнине те палăртнă.

Кăрлачăн 24-мĕшĕнче Патăрьелти культурăпа кану центрĕнче Культура çулталăкне савăнăçлă лару-тăрура уçнă. Асăннă мероприяти тĕлне районти «Çăкăр» историпе этнографи музейĕн ĕçченĕсем «Анатри чăвашсен этнографийĕ» курав йĕркеленĕ. Экспозицире – сурпансем, пит тата алă шăллисем, тĕрлĕ йышши çăпата, чăваш кĕпи-саппунĕ, тухья-хушпу, шупăр-халат, сăхмансемпе килте тĕртнĕ пирсем, капăрчăксем.

**С.ИВАНОВА.**

### Çăпата уявĕ



***«Авалхисĕр пуласлăх çук» теççĕ. Кашни çыннăн тăван халăхăн йăли-йĕркине, тăван çĕр-шывăн кун-çулне пĕлмелле. Çĕрпў районĕнчи Метикассисем çакна яланах асра тытаççĕ. Акă ялти культура центрĕнче иртнĕ çăпата уявĕ те çакнах çирĕплетет.***

Çăпатана манăçа кăларас мар тата унăн уйрăмлăхĕсемпе паллаштарас тĕллевпе пуçарнă мероприятие яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç, ватти-вĕтти хутшăннă. Уявра ачасем тĕрлĕ вăйă выляна, çăпата ывăтас тата ăна тăхăнса чупас енĕпе тупăшнă. Куракансене сăвă-юрăпа, çăпата ташшисемпе савăнтарнă, тĕрлĕ каларăшпа, ваттисен сăмахĕсемпе кăсăклантарнă. Ял тăрăхĕнчи пултаруллă ăста Иван Федоров çинчен те манман. 80 çултан иртнĕ пулин те паянхи кун та çынсене çăпата туса тĕлĕнтерет иккен. Ял çыннисем ун çинчен культура ĕçченĕсем хатĕрленĕ ятарлă презентацире тĕплĕнрех пĕлнĕ. Çавăн пекех çамрăксем уявра çăпата çыхас мелсемпе те паллашнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Урпаш пĕви пулăçсене пухнă

***Иртнĕ шăмат кун çанталăк сивĕ тăнине пăхмасăрах Етĕрне тăрăхĕнчи пулăçсем Урпаш пĕвине ятарлă ăмăртăва пухăннă. Сехет хушшинче вĕсен май килнĕ таран нумайрах пулă тытмалла пулнă.***

Вĕсен ăсталăхне «Чи нумай пулă», «Чи пысăк пулă», «Чи пĕчĕк пулă», «Чи лайăх пăралакан» номинацисенче хакланă. Чи пысăк пулла хальхинче Андрей Лаврентьев тытнă. Андрей Яргейкинăн вăлтине вара чи пĕчĕк пулă çакланнă. Сергей Лаврентьев пуринчен ытларах пулă тытнă. «Чи çамрăк пулăçă» ята Игорь Игнатьев тивĕçнĕ. Çĕнтерўçĕсене асăнмалăх парнесемпе чысланă хыççăн пурте пĕрле çавăнтах пĕçернĕ пулă шўрпине ас тивнĕ, вĕри чей ĕçнĕ. Пулăçсем нарăсăн 23-мĕшĕнче те çакнашкал ăмăрту йĕркелеме калаçса татăлнă. Ун чухне, паллах, урăх пĕвери пулăсене «тĕрĕслĕç».

**А.ГРОМОВА.**

### Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 25, каçхине 30 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 766 мм, сывлăшри нўрĕк 75 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 20 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çекунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 29, каçхине 33 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 774 мм, сывлăшри нўрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 24 минут.**

*Пулăм*

# Чи хăрушă та юнлă блокада

***Кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра Раççей Çар мухтавĕн кунне паллă турĕç. Шăпах çак кун Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен хăтарнăранпа 70 çул çитрĕ.***

Историрен çакă паллă: фашистсем Ленинграда 1941 çулхи утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче тапăнма пуçланă. Çурла уйăхĕнче Вермахтăн «Çурçĕр» çарĕсен ушкăнĕсен пĕр пайĕ Лееб фельдмаршал ертсе пынипе Ленинграда çĕршывпа çыхăнтаракан чукун çулсене татнă, авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче вара хулана блокадăна илнĕ. Нимĕç командованийĕ шухăшланă тăрăх – Ленинградра пурăнакансем выçăпа тата сивве пула вилмелле. Блокадăна 2,5 млн ытла çын лекнĕ, çав шутра 400 пин ача. Апат-çимĕç саппасĕ чаксах пынă. 1941 çулхи чӳк-раштав уйăхĕсенче рабочие кунне 250 грамм çăкăр панă, служащисене, ачасемпе старицсене – 125 грамм çеç. 1941-1942 çулсенчи кĕркуннепе хĕлле – блокадăн чи хăрушă вăхăчĕ. Хĕл ир ларнă, вĕри шыв пулман, çуртсене те хутса ăшăтайман, çавна май çынсем кĕнекисене, сĕтел-пуканне çунтарма, йывăç çуртсене сӳтме пуçланă. Дистрофи чирĕпе тата шăнса пин-пин çын вилнĕ.

Ленинградра пурăнакансем темĕнле йывăр пулсан та ĕç пирки манман: администраци учрежденийĕсем, поликлиникăсем, ача сачĕсем, театрсем, уçă библиотекăсем ĕçленĕ. Киров ячĕллĕ завод та хупăнман, трамвайсем те çӳренĕ. Фронта кайнă ашшĕсене 13-14 çулти ачасем улăштарнă. 1941 çулхи чӳк уйăхĕнче пăрланнă Ладога кӳлли тăрăх хулана апат-çимĕç илсе килме пуçланă. Ку магистрале «Пурнăç çулĕ» тенĕ. 1942 çулхи кăрлач уйăхĕнче çак çулпа пĕрмаях çӳреме тытăннă. Нимĕçсем унта бомба та пăрахнă, вĕçĕмсĕр персе те пăхнă, çапах апат-çимĕç турттарма чарайман.

1943 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче блокадăна сирес енĕпе ятарлă операци пуçланнă. Кăрлачăн 18-мĕшĕнче Ленинград тата Волхов фрончĕсем Шлиссельбург районĕнче пĕрлешнĕ, вĕсем тăшманункине татнă. Парăнман Ленинград вунă километрлă хĕсĕк коридор урлă çĕр-шывпа хутшăнма шанăç илнĕ. Блокадăна сирни пирки çав каçах радиопа пĕлтернĕ. Çакă хулара пурăнакансене пурне те савăнтарнă. Тепĕр кунхине урамсене ялавсемпе илемлетнĕ. Çапах хулана çулталăкран çеç тĕпрен ирĕке кăларма май килнĕ. 1944 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче çак ятпа салют панă.

Ленинград блокади 900 куна пынă. Вăл – этемлĕх историйĕнчи чи юнлă блокада. Официаллă кăтартусем тăрăх – çав хулара 600 пин ытла çын выçăпа вилнĕ, официаллă мар çăл куçсем ĕнентернĕ тăрăх – миллиона яхăн çын. 300 пин ытла салтакпа офицер Ленинграда хӳтĕлесе пуç хунă. Архив материалĕсенчен çакă паллă: Ленинград хулипе облаçĕнчи тăванла масарсенче Чăваш Енрен вăрçа кайнă 5 пин салтака пытарнă. Тепĕр 300-шĕ Пискарево асăну комплексĕнчи тăванла масарта канлĕх тупнă.

Ленинградра пурăнакансем блокада вăхăтĕнче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн хулана Герой-хула ятне панă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем, «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» медале тивĕçнисем тата «Блокадăри Ленинградра пурăнакана» паллăпа чысланă çынсем çак кунсенче РФ Президентĕнчен Ленинград блокадине сирнĕренпе 70 çул çитнĕ ятпа салам илеççĕ. Çĕр-шыв ертӳçин çырăвĕсем Раççейĕн пĕтĕм кĕтесне çитеççĕ. Çакнашкал салама 164 пин çын патне янă.

Паллă çак пулăма халалласа Чăваш Енре тĕрлĕ мероприяти иртет.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Тĕрĕслесе тăма шантарнă

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров «çĕнетсе юсанă» çуртпа тĕплĕн паллашнă хыççăн лару-тăрăва хăй тĕрĕслесе тăма шантарнă. Унта вăл надзор органĕсен ертӳçисемпе пĕрле кăрлачăн 22-мĕшĕнче пулнă. Пĕр кун маларах пурăнмалли çак объектри çивĕч ыйтусене Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикинчи Йышăну пӳлĕмĕнче хускатнă.***

Канаш хулинчи Тăвай çулĕ урамри нумай хваттерлĕ 9-мĕш çурт, фасачĕ çуркаланса пĕтнĕ май, иртен-çӳрен куçне тӳрех курăнать. Шала кĕрсен вара пурăнакансен чăтăмлăхĕнчен тĕлĕнмелли кăна юлать: пӳлĕмсен маччисем кĕç-вĕç йăтăнса анас пек, урайĕсем çĕршĕннĕ, хваттерсенчи пăнтăх тата канализаци шăрши кăмăла пăсать.

Çурта 2009 çулта реконструкциленĕ хыççăн хута янă. 35 хваттертен 33-шне кивĕ тата аварилĕ пурăнмалли çурт-йĕртен куçарнă граждансене ятарлă программăпа килĕшӳллĕн валеçнĕ. Малтанах савăннă вĕсем, анчах çĕкленӳллĕ кăмăл нумая пыман, пирвайхи кунсенчех пăтăрмахсем сиксе тухнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче туса лартнăскер маларах администраци çурчĕ шутланнă. Тĕрĕссипе, ăна ячĕшĕн, аларан кайтăр тесе кăна реконструкциленĕ.

Вырăнти влаç хваттерсене кăна тӳлесе илнĕ, хушма пӳлĕмсемшĕн тăккаланма шухăшламан. Котельнăя тата электроçыхăну линине ĕçлетерессипе çыхăннă ыйтусене юридици тĕлĕшĕнчен татса паманнипе вĕсемпе усă курма май килмен. Çавна май Канашри управляющи компанисенчен пĕри те ку çурта пăхса тăмашкăн илесшĕн пулман. Халĕчченхи – «Восточный» ООО – хула влаçне пĕлтермесĕрех 2013 çулхи çу уйăхĕнче ăна йышăнма килĕшменнипе хуçасăр çуртра пурăнакансем çăвĕпех вĕри шыв илеймен, кăçалхи кăрлач уйăхĕнче икĕ талăка яхăн электроэнергисĕр ларнă. «Шăнса хытасран» авари пирки пĕлтернĕ хыççăн муниципалитет хăтарнă.

Канаш хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçне пурнăçлакан Людмила Иванова пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра асăннă çурта пăхса тăрассипе аукцион ирттерес ыйтăва çĕкленĕ тата унта пурăнакансемшĕн пĕлтерĕшлĕ тытăмсене йĕркене кĕртнĕ.

«Çынсене кивĕ пĕр çуртран теприне, çавнашкаллинех, куçарни – килĕшӳсĕр пулăм. Çурта çĕнетсе улăштаракансен ыйтăвĕ паян çивĕчленсе çитнĕ, прокуратурăн ăна тĕплĕн тишкермелле. Айăплисене явап тыттармалла. Контрольпе надзор органĕсемпе пĕрле ку ĕçе вĕçне çитеретпĕрех», – шантарнă Геннадий Федоров хваттер хуçисемпе тĕл пулнă май. Федерацин тĕп инспекторĕ çирĕп мерăсем йышăнмашкăн тĕрĕслевсемпе экспертизăсем ирттерме хушнă.

■ **В.ИЛЬИНА**

# Ишек вĕсене ăшшăн йышăннă

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенче пирĕн республикăра 18 ача çурчĕ хута кайнă. Вĕсенче вăрçă пыракан тăрăхсенчен эвакуаци шучĕпе куçарса килнĕ виçĕ пин ачана вырнаçтарнă. Çав шутран 380-шĕ – Нева çинчи хуларан.***

Унка лекнĕ хулари ачасене Нева шăнман чухне – çар карапĕсемпе, пăр ларсан машинăсемпе каçарнă. Нимĕç самолечĕсем бомба шеллемен – çынсем çине вилĕм тăкнă. Çĕр-çĕр ачапа вĕсене ăсатма тухнисен пурнăçĕ çакăнта татăлнă.

Чăваш АССР Вĕрентӳ министерстви Ишекри ача çуртне 1943 çулхи çурла уйăхĕнче уçнă. Унта блокадăри Ленинград хулинчен килнĕ 100 ача хӳтлĕх тупнă. Интернат валли колхоз правленийĕ тата почта уйрăмĕ вырнаçнă, Ишек ял ĕçтăвкомĕн тата ялти шкулăн кивелнĕ çурчĕсене уйăрнă.

Ишеке Ленинградран ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасене илсе килнĕ текен хыпар хăвăрт сарăлнă. Вăл вăхăтра кунти çынсен пурнăçĕ тăкăс пулин те ял халăхĕ ача çуртне кĕпе-тумтир, атă-пушмак, апат-çимĕç илсе пынă.

Ишлей районĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕн 1943 çулхи çĕртме уйăхĕнчи хушăвĕпе ача çурчĕн директорне Ишекри вăтам шкул вĕрентекенне А.Арбатовăна çирĕплетеççĕ. Кăштахран унăн вырăнне А.Дивиткина йышăнать. 1944 çулхи пуш уйăхĕнчен 1948 çулхи çурлаччен çак тивĕçе вăрçă хирĕнчен йывăр аманса таврăннă В.Сорокин офицер пурнăçлать. Василий Ефимовича паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, нумай медальпе наградăланă. Сăмах май, 1948 çулта Ишекри ача çурчĕ хупăнсан В.Сорокина Ишлей районĕн вĕренӳ пайĕн ертӳçине çирĕплетнĕ. Чăваш радио хыпарлавпа телекурав комитетĕнче 30 çул ытла ĕçлет, чылай вăхăт – тĕп редакторта, массăллă информаци хатĕрĕсемпе тачă çыхăну тытать.

Интернатра Нева çинчи хуларан килнĕ ачасемпе пĕрлех вырăнти çынсен, ашшĕсем вăрçăра пуç хунисен, ачисем те кунта хӳтлĕх тупаççĕ. Сăмахран, Ишекри Арбатовсен çемйинчен виççĕн – Вениамин, Елизавета тата Анатолий – воспитани илнĕ.



● *1943-1948 çулсенче Ишекри ача çурчĕн директорĕнче ĕçленĕ В.Сорокин.*

Ачасен ашшĕ Петр Михайлович 1942 çулхи чӳк уйăхĕнче, аслă пиччĕшĕ Геннадий 1943 çулхи нарăсра тăшманпа çапăçса пуç хунă. Тепĕр пиччĕшĕ Николай – фронтра. Ленинградран килнисен хушшинче те ун пеккисем пулнă. Акă Калининсен çемйинчен Фридрих, Леонид тата Роза Ишекри ача çуртĕнче пурăннă.

Воспитанниксем валли пур услови те çителĕклĕ пулнă. Вĕсем икĕ çуртра выртса тăнă, кунне виçĕ хут апатлантарнă, ялти вăтам шкулта вырăнтисемпе пĕрле вĕреннĕ. Малтанхи çулах вырăс класне те йĕркеленĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче хуçалăх ĕçне хастар хутшăннă, эмел курăкĕ пухнă, йĕтем çинче тырă сăвăрнă, михĕсене тултарнă, çĕр улми пуçтарнă. Аслăрах воспитанниксенчен хăшĕ-пĕри «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медаль илме тивĕçнĕ.

Ял çыннисем Ленинградран килнĕ хăр тăлăхсене усрава та илнĕ. Акă Вăрăмту ялĕнче пурăннă Фекла Иванова çулталăк çурă тултарнă Анатолие çемье ăшшине туйтарса ӳстернĕ. Анатолий Васильевич электротехника производствинче тăрăшса тивĕçлĕ канăва тухать. Тăван ашшĕ-амăшне шырать, шăпипе кăсăкланать. Амăшĕ вилнĕ иккен, ашшĕ хыпарсăр çухалнă. Ленинграда пурăнма чĕнсен, хваттер пама шантарсан та пĕчĕкрен пăхса ӳстернĕ амăшне тата хăйне хăват панă чăваш çĕрне пăрахса кайма килĕшмест. Кун пек тĕслĕхсем татах илсе кăтартма пулать.

Ишекри ача çуртĕнче ӳснисем каярахпа яваплă вырăнсенче ĕçлесе пенсие тухнă. Вĕсен йышĕнче – аслă шкул преподавателĕ В.Васасина, атом пăр çĕмрен строителĕ В.Мамаев, авиаци моторĕсен институчĕн инженерĕ Г.Шугардт, Шупашкарти ТЭЦ-2 директорĕн канашçи П.Дороненко тата ыттисем. Çавăн пекех конструкторсем, токарьсем, слесарьсем, шахтерсем, педагогсем, медицина ĕçченĕсем пур.

Ишексем историре юлнă пулăма асрах тытаççĕ. Ялти тавра пĕлӳ музейĕн пĕр залне 1943-1948 çулсенче блокадăри Ленинград ачисем пурăннă ача çурчĕн ĕç-хĕлне сăнлакан стендсемпе панносем вырнаçтарнă. Ытти экспонат та нумай кунта. Блокадăна сирнĕренпе 70 çул çитнине хатĕрленсе çĕнĕ курав йĕркеленĕ.

■ **Фадей КОНСТАНТИНОВ.**
Шупашкар районĕ



● *Ленинградран килнĕ ачасен кĕçĕн ушкăнĕ /1944 çул/.*



● *«Слава» совхоз ĕçченĕсем Ишекри ача çуртĕнче пурăннисемпе пĕрле Пискарево çăви çинче /1985 çул/.*

*Ĕçлĕ тĕл пулу*

# Пенсионерсен спартакиади тивĕçлĕ шайра иртĕ

***Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн Социаллă политика комитечĕн председателĕ, Раççей пенсионерĕсен союзĕн ертӳçи Валерий Рязанский РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕнче ветерансен общество организацийĕсен представителĕсемпе тата массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсемпе тĕл пулчĕ. Асăннă мероприятие РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева, Раççей пенсионерĕсен союзĕн регион уйрăмĕн председателĕ Валерий Сапожников, ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн çумĕ Александр Медюков хутшăнчĕç.***

Пичет кăларăмĕсенче ĕçлекенсем валли йĕркеленĕ брифингра Валерий Рязанский пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Ене вăл ĕçлĕ çӳревпе пĕр кунлăх килнин тĕллевĕ – Шупашкарта Раççей пенсионерĕсен пĕрремĕш спартакиадине ирттерме хатĕрленесси. Маларах республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнин тата министерствăсемпе ведомствăсен ертӳçисемпе ирттернĕ канашлăвăн теми те çак ыйтупах çыхăннă.

«Пенсионерсем валли компьютер енĕпе нумай енлĕ тупăшусем çулленех пулаççĕ-ха. Тĕплĕн шухăшларăмăр та федераци шайĕнче пĕлтерĕшлĕ тепĕр мероприяти хатĕрлени те вырăнлă пуласси́не палăртрăмăр. Физкультурăпа спортра мĕншĕн вăй виçмелле мар? Ку енĕпе ырă тĕслĕх пухнă темелле: иртнĕ çул Курск хулинче Раççей федераци округĕсен 17 команди вăй виçрĕ. Аслă ăру çыннисене çакă килĕшрĕ. Пирĕн çĕр-шывра 41 млн ытла пенсионер пурăнать. Вĕсене физкультурăпа спорта явăçтарас енĕпе патшалăхăн та ĕçлемеллине тĕпе хурса çак ыйтăва татса патăмăр темелле – спартакиада ирттерме палăртрăмăр. Ăçта тетĕр-и? Чăваш Республикинче. Сăлтавсăр мар паллах», – палăртрĕ Мускав хăни тĕл пулăва уçнă май. Çакна вăл пирĕн хутлăхра физкультурăпа спорта тивĕçлипе хакланипе, пурлăх никĕсне çирĕплетсе тăнипе, республика ертӳлĕхĕ сывă та таса, пур енлĕн аталаннă ăру çитĕнтерес тĕллеве тĕпе хунипе сăлтавларĕ. Спартакиадăна Чăваш Енре ирттерес шухăша республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хаваспах йышăннă. РФ спорт министрĕ Виталий Мутко та хирĕçлемен, пĕтĕм Раççейри спорт мероприятийĕсен графикне кĕртнĕ.

Нумай нацилĕ çĕр-шыв пенсионерĕсемшĕн ку мероприяти чăннипех уяв пулса тăмалла. Ахальтен мар ăна 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче, Раççей пĕрлĕхĕн кунĕнче, ирттерме палăртнă.

Вăл пирĕн хутлăхри спорт объекчĕсемпе тĕплĕн паллашнă, условисем çĕр-шыв регионĕсен командисемшĕн чăннипех лайăххине, спорт менеджерĕсен ушкăнĕ хатĕррине палăртрĕ. Валерий Владимирович общество организацийĕн регионти уйрăмĕн ĕç-хĕлне те пысăка хурса хакларĕ, ытти çĕртен килекенсемшĕн кунти паха опытпа паллашни усăллă пуласси́не пĕлтерчĕ. Чăн та, сывă пурнăç йĕркине сарас, спорт мероприятийĕсене хутшăнас енĕпе те пуçарулă Валерий Сапожников ертсе пыракан пĕрлĕх. Аслă ăру çыннисем районхулари ФСКсене çӳреççĕ, сывлăха тĕреклетеççĕ. Чылай пулăшăва вĕсем çăмăллăх мелĕпе тивĕçеççĕ. Тупăшусенче вăй виçекенсем те йышлă. Иртнĕ çулхи юпа уйăхĕнче, тĕслĕхрен, Çĕнĕ Шупашкар хулинче аслă ăру çыннисен «Спортри вăрăм кун-çул» республикăн пĕрремĕш спартакиади иртнĕ. Унта общество организацийĕн районхулари уйрăмĕсен 24 команди тупăшнă. Чăваш Ен пенсионерĕсенчен чи пултаруллисем спортăн регионсен хушшинчи фестивальне Курск хулине кайма тивĕç пулнă, унтан парнесемпе таврăннă.

«Спартакиада тивĕçлĕ шайра иртесси иккĕлентермест. Çапла эпир патшалăх аслă ăру çыннисене манăçа кăларманнине тепĕр хут çирĕплетсе парăпăр», – пĕтĕмлетрĕ «Раççей пенсионерĕсен союзĕн» ертӳçи.

Журналистсене асăннă мероприятие укçапа тивĕçтерессипе, спонсорсен пулăшăвĕпе çыхăннă ыйтусем интереслентерчĕç.

Сывă пурнăç йĕркине халăх хушшинче сарнине, аслă ăру çыннисем ку енĕпе ыттисене, уйрăмах çамрăксене, ырă тĕслĕх кăтартса-хавхалантарса вĕсене пурнăçра тивĕçлĕ вырăн тупмашкăн пулăшнине пус-тенкĕпе хаклаймăн. Вăрттăнлăх мар: 12 çула çитиччен спортпа туслашнă ача-пăча кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен çирĕпленет-тĕрекленет, шуçлак çул çине тăмасть. Çак ӳсĕмре вĕсем ытларах чухне асламăшĕ-аслашшĕ, кукамăшĕ-кукашшĕ хӳттинче пулаççĕ, вĕсемпе ытларах хутшăнаççĕ, аслисен ырă енĕсене ăша хывса çитĕнеççĕ.

Общество организацийĕсен представителĕсемпе тата массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсемпе ирттернĕ тĕл пулура Валерий Рязанский çавăн пекех чылай ыйтăва – «вăрçă ачисене» çăмăллăхпа, регионта «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ятпа тивĕçтерес, ял пенсионерĕсене, нумай ачаллă çемьесене хӳтĕлес тата ытти пирки – хуравларĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

# Вăрнар паттăрĕсем те çапăçнă

***Ленинграда тăшманункинчен хăтарма Вăрнар тăрăхĕнчи çынсем те хутшăннă. Шел те, паян хула ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ паттăрсенчен районта иккĕн кăна юлнă.***

Калининăра пурăнакан Иван Михайлова 19 çулта çара илнĕ. Сталинград хулишĕн пынă юнлă çапăçусене хутшăннă. Йывăр аманнă. Госпитальтен сывалса тухсан 1942 çулхи раштавра каллех фронта янă. Хальхинче – çурçĕрелле, Ленинград еннелле. Каташ каччи Волхов фронтне, 2-мĕш армин стрелоксен 224-мĕш çыхăну ротине лекнĕ. Совет воинĕсем «Хĕлхем» яваплă операцие хатĕрленнĕ.

1943 çулхи кăрлачра пирĕн çарсем наступление куçнă. Волхов фрончĕн 2-мĕш тата Ленинград фрончĕн 67-мĕш армийĕсем 1-мĕшпе 5-мĕш рабочи поселокĕсем тĕлĕнче пĕрлешсе тăшман ункине татнă. Ленинград Пысăк çĕрпе çыхăну тытма пуçланă.

Çак çапăçусенче Иван Михайлович дивизипе полк штабĕсен хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе тăнă. Дивизи штабĕнчен полк командирне питĕ кирлĕ пакета вăхăтра çитерсе панăшăн ăна «Çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медальпе наградăланă.

И.Михайлов Днепр çинчи çапăçусемшĕн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ. Польшăна, Чехословакие ирĕке кăларма хутшăннă. Берлина çитнĕ.

Мирлĕ пурнăçра Иван Михайлович ĕмĕрне шкулта ĕçлесе ирттернĕ. 25 çул ытла судомоделистсен кружокне ертсе пынă. Унта çӳрекенсенчен вуннăшĕ Горький хулинчи шыв транспорчĕн инженерĕсен институтне вĕренсе пĕтернĕ.

Пăртасри Василий Михайловпа */сăн ӳкерчĕкре сулахайра/* ырă самантра паллашма тӳр килнĕччĕ. 2010 çулта 65 çул ытларах иртнĕ хыççăн ăна вăрçă награди шыраса тупнăччĕ. Василий Михайлов кĕçĕн сержанта «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăлассси çинчен 30-мĕш артиллери полк командирĕ 1944 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнчи приказа алă пуснă. Çак наградăна вăрçă паттăрĕн кăкăрĕ çине ытти медаль-орден çумне, вăл шутра «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» медаль те пур, чаплă лару-тăрура çакса янăччĕ.

Василий Михайлович блокадăри Ленинграда ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă. Нимĕç фашисчĕсене тĕп тăвас тесе темиçе уйăх çапăçу пынă. Пин-пин совет салтакĕ кунта выртса юлнă. Василий Михайлович та аманнă, бомба ванчăкĕ янахĕн сылтăм енне аркатнă. Новосибирскри эвакогоспитальте çур çул сипленнĕ хыççăн ăна килне янă. Анчах мирлĕ пурнăç ытамĕнче нумаях пулма май килмен. Уйăхранах салтак аттине тăхăнма тивнĕ. Ку хутĕнче В.Михайлов 296-мĕш артиллери полкне лекнĕ: 122 миллиметрлă гаубица наводчикĕ.

Паттăр салтак тăван ялне вăрçă чарăнсан çулталăкран тин таврăннă. Тăван колхозра бригадирта, ферма заведующийĕнче вăй хунă.



■ **Светлана ЧИКМЯКОВА**

# Вырăна тухса пулăшаççĕ

***Республикăри ĕçлев службин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – патшалăх пулăшăвĕпе граждансене тивĕçтерессине ӳстересси. Çак задачăна ăнăçлă татса парас тесе иртнĕ çул Чăваш Енре халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсен мобильлĕ 12 офисĕ ĕçленĕ.***

### 2013 çулта вĕсем 551 хут тухса çӳренĕ

Аякра вырнаçнă ялсенче çапла майпа усă курса йĕркеленĕ 640 мероприяти вăхăтĕнче 7708 çынна ĕçе вырнаçас тĕлĕшпе консультаци тата пулăшу панă.

Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенчи, çавăн пекех Патăрьел, Вăрнар, Куславкка, Йĕпреç, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне районĕсенчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче мобильлĕ офиссем сусăрсене «пĕр чӳрече» мелĕпе тăтăшах йышăнаççĕ. Çакăн йышши мероприятисене халăха социаллă хӳтлĕх паракан органсен, социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрсен, Пенси фончĕн представителĕсемпе, медицинăпа социаллă экспертизăн Чăваш Республикинчи тĕп бюровĕн врач-эксперчĕсемпе пĕрле йĕркеленĕ. Иртнĕ çулта кунашкал йышăнусене 78 хут ирттернĕ, специалистсен консультацийĕпе пулăшăвне 347 инвалид илнĕ.

Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенче, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне районĕсенче мобильлĕ офиссемпе усă курса 34 мини-ярмăркка пухнă, вĕсене 507 çын хутшăннă. Çапла вара ĕçпе тивĕçтерекен 152 çынна хăйсене кирлĕ кадрсем суйлама пулăшнă.

Ĕçпе тивĕçтерекен центрсен мобильлĕ офисĕсен мелĕпе Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенче, Вăрнар, Куславкка, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне районĕсенче граждансене професси ориентацийĕ, ĕççĕр çынсене психологи хӳтлĕхĕ тата социаллă адаптаци парас тĕллевпе информаципе консультацин 129 кунне йĕркеленĕ.

Вырăна тухса çынсемпе хутшăннин усси пысăккине пурнăç çирĕплетет. Мобильлĕ офиссен пулăшăвĕпе пĕлтĕр республикăра пурăнакан çĕр-çĕр çын усă курнă. 2013 çулта вĕсем Канаш /1241 çын тивĕçнĕ/, Улатăр /1088/ хулисенче



тата Куславкка районĕнче /990/ ăнăçлă ĕçленĕ. 2013 çулта мобильлĕ офиссем урлă професси консультацийĕсене 4,5 пине яхăн çын тивĕçнĕ, мĕне пултарнине, туртăма, пурнăç тĕллевне палăртас тĕллевпе 1652-ĕн тест витĕр тухнă.

Çирĕплетнĕ йĕркепе ĕççĕр тесе йышăннă граждансене паракан социаллă тӳлев пирки служба центрĕсен специалисчĕсенчен 2,5 пине яхăн çын ыйтса пĕлнĕ. Ваканси çинчен информаци 2336 гражданина панă. Ĕçе вырнаçма тепĕр çĕре каймашкăн тата ытти регионта куçмашкăн патшалăх пулăшăвне илессипе çыхăннă консультацие 1620-ĕн, обществăн тӳлевлĕ ĕçĕсем пирки пĕлтернине – 2404, харпăр хăй ĕçне йĕркелесси çинчен 2430 çын тивĕçнĕ.

Мобильлĕ офиссемпе усă курнипе 2013 çулта 1362-ĕн ĕçе вырнаçнă. Вĕсенчен 300-е яхăн – пĕлӳ учрежденийĕсенче вĕренекенсем, 20 инвалид, ачана 3 çула çитиччен пăхакан 9 амăшĕ тата ытти.

Мобильлĕ офиссен мелĕпе Канаш хулинче /343 çынна вырнаçтарнă/, Çĕрпӳ /271çын/, Вăрмар /178 çын/ районĕсенче тухăçлă усă кураççĕ.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службы.**

Ӳнер

# Чăваш художникĕсем – Китай куравĕнче тата нумай томлă энциклопедийĕнче

***2014 çул пуçланас умĕн Китай Халăх Республикин Раççей живописçне тĕпчекен ассоциацийĕн председателĕ Чэнь Фэнюэ тата унăн çумĕ Фу Цзяожэнь пуçарăвĕпе Харбин хулин издательстви пысăк калăплă, илемлетсе хатĕрленĕ ӳнер энциклопедийĕ пичетлесе кăларчĕ. Виçĕ томра – пин ытла картина репродукцийĕсем.***

Харбин хули Сунгари юхан шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Унăн шăпи XIX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче Раççей Хĕвел тухăç Китайра чукун çул хывнипе çыхăннă. 1932-1945 çулсенче Япони пусмăрĕнче пулнă. 1945 çулта Совет Çарĕ ăна ирĕке кăларса Китай правительстви ыйтнипе хăй патшалăхне çĕнĕрен кĕме пулăшнă. Халĕ Харбинра 3 миллиона яхăн çын пурăнать.








● *«Хĕвеле ăсатакансем».*

Чукун çул хывнă чухне те, совет салтакĕсем çак хулана ирĕке кăларнă çулсенче те, кайрантарах заводсемпе фабрикăсем тунă вăхăтра та сахал мар чăвашăн шăпи Харбинпа çыхăннă.

Сăмахран, Шупашкар районне кĕрекен Хачăк ялĕнче çуралса ӳснĕ Г.И.Кондратьев /М.Г.Кондратьев искусствовед ашшĕ/, СССР Çул-йĕр министерстви янипе иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Чанчунь, Мукден хулисенче инженер-строительте ĕçленĕ, Харбин хулинче тăтăшах пулнă. Вăл КНР правительствин медальне тивĕçнĕ.

2013 çулхи чӳк уйăхĕнче Харбин хулин музейĕнче виçĕ томлă ӳнер энциклопедийĕн презентацийĕ иртнĕ. Унта Раççей художникĕсен пысăк куравне йĕркеленĕ. Экспозицире чăвашсен икĕ ӳнерçин – А.П.Рыбкинпа А.Н.Федоровăн – картинисене вырнаçтарнă. Хэйлунцзян Ӳнер академийĕ вĕсене презентацие академин укçи-тенки шучĕпе чĕнсе илнĕ.

* * *

Энциклопедин пĕрремĕш кĕнеки «Паянхи Раççей художникĕсем. Санкт-Петербург томĕ» ятлă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш кĕнекесем – «Хальхи Раççей графикĕсем». Икĕ чĕлхепе – китайла тата вырăсла – çырнă. Ум сăмахĕсене Хэйлунцзян Ӳнер академийĕн президенчĕ Чэнь Гуй, Хэйлунцзян провинцийĕн Культура департаменчĕн ертӳçи Сун Хунвэй, Культура çыхăнăвĕпе Раççей живописçне тĕпчекен ассоциаци председателĕ Чэнь Фэнюэ хатĕрленĕ. Раççей енчен Раççей тава тивĕçлĕ художникĕн О.Ю.Яхин профессорăн ум сăмах статйине пичетленĕ.

Китайăн сумлă виçĕ çынни хăйсен çĕр-шывĕпе Совет Союзĕ çинчен çырнипе пĕрлех паянхи Раççей хушшинчи хутшăнусем пирки каласа кăтартнă. Санкт-Петербург профессорĕ вара хальхи вăхăтри искусство пулăмĕсене, аталану çул-йĕрне çутатнă.

Энциклопедие чăваш художникĕсен А.П.Рыбкинпа А.Н.Федоров произведенийĕсен репродукцийĕсем кĕнĕ.

Анатолий Петрович Рыбкин – Чăваш халăх художникĕ, Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ, Раççей Ӳнер академийĕн корреспондент членĕ, Санкт-Петербург Наука-искусство академийĕн академикĕ. Вăл тĕрлĕ шайра иртнĕ 150 яхăн курава хутшăннă. Энциклопедире унăн сăн ӳкерчĕкĕ тата ун çинчен китайла тата вырăсла çырни пур. Художник картинисен ретĕнче çак ĕçсем: «Хĕвеле ăсатакансем», «Çуркуннене çывхартакан», «Гиацинтсен утравĕ çинчи çăлтăр çумăрĕ», «Тăван кил-çуртăн ăшă юрĕ», «Чукотка çыннисем», «Тусен тӳпинчи юр» тата «Аннем. Атте-аннен кил-çурчĕ».

Пысăк мар статьяра авторăн пур ĕçне те хаклаймăн. Çакна асра тытса унăн хăш-пĕр картини пирки çеç мехел çитнĕ таран чарăнса тăрасшăн. Произведение ăнланас тесен виçĕ саманта чуна хумалла. Пĕрремĕшĕ: художник мĕн калас тенине ăнланса илмелле. Иккĕмĕшĕ: сăнара калăпланă чухне автор мĕнле меслетсемпе усă курнине ăнланмалла. Виççĕмĕшĕ: художникăн произведение хывнă шухăш-ĕмĕчĕ металл шăратакан вутпа хĕрсе хĕвел сĕмне илнине пĕлмелле. Пиçмен çырлан тĕсĕ, пиçмен çăкăрăн техĕмĕ, хĕрмен хурçăн вăйĕ çук.

Чи сумлă, тарăн сăнарлă ĕçĕсенчен пĕри – «Хĕвеле ăсатакансем». Унта пурĕ вун пĕр çынна ӳкерсе кăтартнă. Метафорăпа шухăш тĕлĕшĕнчен – пур халăх та пур темелле. Кĕрхи кичем çулçăсенчен çаралнă нумай-нумай туратлă вăрман ăшĕнчи çынсем – хĕвеле ăсатса яракансем – пĕрле пуçтарăнса чӳк уявĕ ирттереççĕ. Куçĕсене пурте хупнă. Йăла-йĕрке тăрăх – хĕвел çути, ташши те çук имĕш, çут çанталăкра йăлтах тĕттĕм. Ваттисем те, çамрăксем те хурлăхлă, вĕсем салху та асамлă чăтăмлăх самантĕнче. Малти ретре, илем пикинчен инçе мар, вата ăсчах – чӳке ертсе пыраканĕ – хĕвеле халалланă авалхи, ĕмĕртен килекен юрра кĕвĕлет. Вăл та вăхăтлăха çут çанталăкран уйрăлнă евĕр мăшăр куçне хупса хĕвелĕн асамлă гимнĕн ăшне путнă. Анчах та мăчавăр килес çуркунне хĕвел каялла таврăнасса лайăх ăнланать. Вăл гимн сассипе хĕвеле ăсатать те, кĕтет те.

Авторăн тепĕр ĕçĕ – «Гиацинтсен утравĕ çинчи çăлтăр çумăрĕ». Пир çинче грексен мифологийĕпе çыхăннă асамлă гиацинт чечекĕсем çывăхĕнче хăйĕн çине шап-шурă тум уртса янă илем пики тăрать. Вăл пачах та асăннă картинăри евĕр мар. Ăслă куçĕсем куракана илĕртеççĕ. Мăнаçлăн усăнса аннă çӳçне вĕттĕн-вĕттĕн, нумай-нумай, темиçе хутчен çивĕтленĕ. Хăй çав тери салхуллă. Унăн чун-чĕрине, ăс-хакăлне тарăн шухăш çавăрса илнĕ. Çӳлти тӳперен илем пики çине çăлтăр çумăрĕ çăвать. Ярăнса анакан чунсене çухатнă çăлтăр йĕрĕ-çулĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслĕ. Халăх ăнлавĕпе – çĕр çинчи çыннăн тӳпере хăйĕн çăлтăрĕ пур. Вăл ӳксен çын пурнăçран уйрăлать. Апла пулсан илем чечекĕ гиацинта мĕн авалтан килекен мифпа çыхăннă утрав çинчи илем пики çине тăкăнакан çăлтăрсем мĕне пĕлтереççĕ-ши? Ку кăткăс ыйту ӳнерçе мар /вăл ăна лайăх ăнланать/, çак ыйту, вулаканăм, картинăна кураканăм, сана.


● *«Гиацинтсен утравĕ çинчи çăлтăр çумăрĕ».*

Анатолий Петровичăн паянхи пурнăçăн хăш-пĕр енне сăнарлакан тепĕр ĕçĕ – «Аннем. Атте-анне кил çурчĕ». Картина композицийĕ виçĕ пайран тăрать. Пĕр енче – чечеклĕ, сар çулçăллă кĕрхи çанталăк. Сылтăмра – сивĕ хĕл. Çурт тӳпинче юр выртать. Ĕмĕр ларса тăракан «венски» çавра тенкел тарăн юр ăшне путнă. Ун çинче тин çеç татса кĕнĕ пан улмисем. Композицин варри пайĕнче виçĕ куçлă кантăк, краççын лампипе юнашар нумай пулмасть пуçтарнă вăрман кăмписем выртаççĕ. Пӳлĕмре килти пуянлăх та, чухăнлăх та куç умĕнчех: çăм атă, типĕтнĕ пулă, хачăпа çип çăмхи, килте тĕртсе илемлетнĕ тăхар т.ыт.те.

Картина тытăмне автор виçĕ жанр çине таянса тунă /портрет, пейзаж, натюрморт/. Çакăнпа пĕрлех унăн тепĕр енĕ пур: композицире интерьер та, экстерьер та çук темелле. Вĕсене юри пăтраштарни куç кĕретех. Пĕр сăмахпа – пурнăçри арпашулăх, йĕрке çукки. Амăшĕ инçене тинкерсе ларать. Никама та кĕтсе илеймен пуль. Йĕпписемпе тем çыхса хатĕрлесшĕн, тен, мăнукĕсем валлиех-и?


● *«Аннем. Атте-аннен кил-çурчĕ».*


● *«Вут-шанкă çинчен хывнă хайлав».*

Паян ялсенче ватăлса çитнĕ пĕччен юлнă амăшсем мĕн чухлĕ.

Художникăн картинисем пурнăçпа тачă çыхăннă, вĕсен сăнарлăхпа илемлĕх вăйне час-часах метафорăпа урăхлатса каланă мелсемпе усă курса кăтартать. А.П.Рыбкинăн ăсталăхĕ те, тавра курăмĕ те çивĕч.

Энциклопедие кĕнĕ пысăк талантлă тепĕр художник – А.Н.Федоров. Александр Николаевич Раççей Ӳнер академийĕ çумĕнчи И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институтĕнчен вĕренсе тухса аспирантурăна кĕнĕ. Ăна вĕреннĕ чухнех ăсталăхри пысăк çитĕнӳсемшĕн академин ылтăн медальне панă. Александр Федерацин Культура министерствин тата Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине илсе тăнă. Ентешĕмĕр Раççейре тата Евразире иртнерĕ 60 ытла курава хутшăннă. Вăл – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ.

Энциклопедире унăн çуллă сăрăпа ăсталанă ултă картинине /«Декамерон», «Машинăпа çӳç касни», «П.Г.Кипарисов портречĕ. Шахмат вăййи», «Вут-шанкă хатĕрлекен çинчен хывнă хайлав», «Хăрах куçлă салтак-снайпер», «Сочири Михаил Архангел чиркĕвĕ»/ тата литографи енĕпе 9 ĕç /«Кĕрешӳ», «Каялла пулни», «Çапăçу», «Малтанхи юр», «Киле илсе çитерекен çул», «Авăн çапни», «Çурçĕрти тĕп хула» ярăмри «Çил-тăман», «Кашкăра йĕрлени», «Рыцарь» ярăмри «Тивĕçлĕ парне»/ вырнаçнă.


● *«Декамерон».*

А.Федоровшăн пурнăçпа искусствăри ăслăлăх тата кĕрешӳ – пĕр туртара. Çакна вăл хăйĕн автопортретĕнче – «Вут-шанкă хатĕрлекен çинчен хывнă хайлав» ĕçĕнче уçăмлă сăнарласа кăтартнă. Хĕллехи каç. Янкăр тӳпене çăлтăрсем паçăрах тухнă. Пир çинчи çамрăк тарăн юр ашса тин çеç касса хатĕрленĕ вут-шанкăн йывăр çыххине йăтса малалла талпăнать. Çак çĕклемре – унăн çамрăклăхĕ, амăшĕпе ашшĕн юратăвĕ, вăрăм çула тухса Шупашкартан Санкт-Петербурга çитни т.ыт.те, т.ыт.те. Ку çеç те мар пуль. Унăн сăнарĕ тарăн философипе çыхăннă: чунĕпе илемлĕхпе йывăрлăха туйса кăткăс пурнăç çулĕпе хăйĕн халăхĕ патне утать. Вăл çак вут-шанкăпа ашшĕпе амăшĕн, тăванĕсен çурчĕсене, халăхăмăрăн килне ăшăтасшăн. Çав ăшша иртнĕ ĕмĕрсенче аслă Н.Я.Бичурина йышăннă Китай та, Хэйлунцзян Ӳнер академийĕ те туяççĕ пулĕ.

Энциклопедири чи лайăх ĕçсенчен пĕри – «П.Г.Кипарисов портречĕ. Шахмат вăййи». Портрет хăйĕн композицийĕпе тата усă курнă меслетпе философи тĕлĕшĕнчен – пысăк пĕлтерĕшлĕ картина. Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институтĕнче ĕçленĕ художник, доцент Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши чунĕсене ăнланнă тата вĕсен тăшманĕсемпе картинăри сăнарсем урлă кĕрешетчĕ. Художникăн, уйрăмах пирĕнтен уйрăлса каяс умĕн, пурнăçĕ йывăрланчĕ, сывлăхĕ начарланчĕ. А.Федоров сăнарланă авалхи Индирен килекен «шахмат вăййи» пачах та уяв вăййи мар. П.Г.Кипарисов тĕллевĕ пурнăçра та, искусствăра та «короле» çĕнтерсе илессиччĕ.

А.Федоров хăйĕн ĕçĕсенче халăхăмăрăн паянхи пурнăçĕпе иртнĕ саманари пулăмĕсене тата мифсемпе легендăсене сăнарлать. Çавăнпа пĕрлех вăл историри ĕмĕрлĕх цивилизацийĕсене çутатса пама тăрăшать. Энциклопедири унăн тепĕр картини «Декамерон» ятлă. Ăна художник XIV ĕмĕр варринче Итали çыравçи Джованни Боккаччо пухса хатĕрленĕ 100 новеллăллă кĕнекене халалланă. Унта чаплă та илемпе пуян Ренессанс ĕмĕрĕн çыравçи Флоренцире пурăннă тапхăра, унăн ытарлă юратăвĕпе пысăк трагедине сăнарлать. Новеллăсенче эротизм пысăк вырăн йышăнать.

А.Федоров ĕрĕхсе ăнтăлакан урхамах çинчи хĕç-пăшаллă юлан утçа сăнласа кăтартнă. Унăн хăмач тĕслĕ мухтавпа чап палли çиле май мăнаçлăн варкăшать. Пурнăç йывăçĕ çумне çылăха кĕме ĕлкĕреймен пике йăпшăнса чăмăртаннă. Вăл вăрăм çӳç пайăркипе турă панă илемне, хăйĕн хĕр чыслăхне упрасшăн. Анчах... анчах юлан утран кая юласшăн мар ыткăнакан синкер палли те – дог йытă – пур-çке.

Картина сăнарĕ уçăмлă, çӳллĕ туйăм шайне çĕкленнĕ. Кунсăр пуçне произведение ăсталанă меслете те палăртас килет. Картина сăрри нумай тĕслĕ мар, кăштах графикăна та аса илтерет. Ятарласа çапла тунă. Çак мелпе автор сăнарлăх вăйĕпе пĕрлех аваллăхри Флоренцин живопиç виçине тытса пырасшăн, ăна палăртасшăн. Сăмах май, Ренессансăн малтанхи тапхăрĕнче живопиçре икĕ меслет пулнă: Флоренцире – йĕрсемпе витĕмли, Венецире – нумай тĕслĕ сăрă лаптăкĕсене тĕпе хуни. Кайрантарах вĕсем пĕрлешсе, иккĕшĕ пĕр пулса Ренессанс искусствине малалла аталантарнă.

А.Н.Федоров ĕçĕсенче илемлĕх тĕнчипе юнашар унăн тĕпчев ăс-хакăлĕ вырнаçнă тесе калас килет. Ку – амăшĕпе ашшĕ пани те, турă хушни те, академи вĕрентĕвĕ те.

Энциклопедире художникăн литографи ĕçĕсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. «Çурçĕрти тĕп хула» ярăмри «Çил-тăман» ĕçне пысăка хурса хакласшăн. Унта ытлашши пĕр йĕр те çук. Композици иртнĕ ĕмĕрсене те, паянхи куна та аса илтерет. Техника енчен те çӳллĕ шайра.

Хальхи вăхăтра литографи мелĕпе ĕçлекен художниксем питĕ сахал. Ку енĕпе Александр Николаевич Раççейре те, Хĕвел анăç Европăра та, Хĕвел тухăçĕнче те малти ретре. Вăл – литографи искусствине тепĕр хут чĕртсе тăратакансенчен пĕри.


● *«П.Г.Кипарисов портречĕ. Шахмат вăййи».*

Çакна шута илсе унăн тепĕр ĕçне – «Кĕрешӳ» ятлине – асăнса хăварас килет. Композицире икĕ çамрăк кĕрешет. Хăшĕ çĕнтерĕ – калама йывăр. П.П.Хусанкай куларăшĕ асра тăрать: «Вăй пухăр, кĕрешĕр, урăрсем çĕре лексенех пĕрпĕрне алă парăр». Ку ăнлану та авалтан килекен ăсчахсен вĕрентĕвĕпе çыхăннă. Литографири кĕрешӳ – ăсчахсен, мăчавăрсен, философсемпе поэтсен вĕрентĕвĕпе пĕр туртара. Вăл ĕмĕрсен пурнăç йывăçĕ умĕнче пулса иртет. Сăнарта – этемлĕх аталанăвĕнчи ĕмĕрсен кĕрешĕвĕ. Вăл нихăçан та чарăнма пултараймасть. Ырă çĕнтерессе ĕненес килет.

А.П.Рыбкинпа А.Н.Федоров – хальхи вăхăтри художниксем. Вĕсем хăйсен ĕçĕсенче тăван халăхăмăрăн пурнăç шăпине, ăс-хакăлне, шухăшне тĕпе хурса, малашлăха пăхса Европăра пулса иртнĕ Ренессанспа çыхăнтарса кĕрешӳпе илемлĕх тĕшшине шыраççĕ. Çакă – паянхи ăслă интеллигенцин ырă туйăмĕ, туртăмĕ.

**Алексей ТРОФИМОВ,**
**искусствоведени докторĕ,**
**профессор**


● *«Кĕрешӳ».*

*Истори*

# Шурă Олимпиада – тăхăр вуннăра

### 1. Камсем вĕсем, пĕрремĕшсем?

***Эпир 2007 çултанпа /шăпах ун чухне хĕллехи XXII Олимпиадăна ăçта ирттерессине палăртнăччĕ/ кĕтнĕ пĕтĕм тĕнчери чи пысăк пĕлтерĕшлĕ спорт уявĕ çывхарать. Сочире ăна нарăсăн 7-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçĕç...***

Олимп вăййисен кун-çулĕ, йăли-йĕрки пуян. Хĕллехи Олимпиадăсем çуллахисенчен кĕçĕнрех. Çапах та кăçалхи Шурă Олимпиада 90 çул тултарать! Хĕллехи спортпа туслă олимпиецсем пирвайхи старта 1924 çулта Франциri Шамони хулинче тухнă. Вăйăсем кăрлачăн 25-мĕшĕнче пуçланнă. Çакă паллă: спортăнултă енĕпе /бобслей, йĕлтĕрпе чупасси, трамплин çинчен сикесси, конькипе чупасси, конькипе эрешлесе ярăнасси, хоккей/ 16 çĕр-шывран пухăннă 258 спортсмен /çав шутра 13 хĕрарăм/ ăмăртнă. Пĕрремĕш вырăна Норвеги йышăннă /18 медаль/, иккĕмĕшĕнче – Финлянди /9/, виççĕмĕшĕнче – АПШ. Чи пултаруллисен ятне Норвеги йĕлтĕрçи Т.Хауг тата Финлянди командинчи конькипе чупакан К.Тунберг тивĕçнĕ, иккĕшĕ те виçшер ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Канада хоккеисчĕсем пилĕк вăйăра çĕнтерсе чемпион пулнă: пурĕ 110 шайба çапса кĕртнĕ.

Тепĕр тăватă çултан черетлĕ Олимп вăййисене Швейцарири Санкт-Морицра ирттернĕ. Статистика çакна палăртса хăварнă: 25 çĕр-шыв, 464 спортсмен, малти вырăнта каллех Норвеги. 1932 çулхи Олимпиада Атлантика океанĕ урлă каçса Лейк-Плэсид хулине «куç хывать». Çулĕ ытла та инçе пулнăран Европăри çĕршывсем Америкăна пысăк делегацисем ярайман. Олимпиецсенчен çуррине яхăн вырăнти спортсменсемпе канадецсем пулнă.

Олимпиадăн тепĕр адресĕ – Германи. 1936 çулхи IV вăйăсенче йыш самаях хушăннă – 668 спортсмен /28 çĕр-шыв/. Австрали, Болгари, Греци, Испани, Турци, Лихтенштейн чысне пирвайхи хут хӳтĕлекенсем те старта тухнă. Ăмăрту призерĕсем Норвеги, Германи, Швеци. Аслă Британи хоккеисчĕсем мала тухса пурне те самаях тĕлĕнтернĕ.

Тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш вăйăсен хушши – 12 çул. Çак «тăхтавăн» сăлтавĕ – иккĕмĕш тĕнче вăрçи. Самана лăплансан 1948 çулта Швейцарире каллех Олимп ялавне çĕклеççĕ. Тепĕр тăватă çултан Шурă Олимпиадăна Осло хулине шанса параççĕ. Ытти вăййа яланах сăрт-туллă курортсенче йĕркеленĕ пулсан, ку хутĕнче олимпиецсене çĕршывăн тĕп хули йышăнать. Унта пуçласа Олимп çулăмĕн хĕллехи эстафетине ирттереççĕ. Пĕрремĕш хут хĕрарăм йĕлтĕрçĕсем ăмăртаççĕ. Финлянди спортсменки Л.Видеман 10 километрлă дистанцие 41 минут та 40 çеккунтра вĕçлесе чемпионка пулать. Вăл тата конькипе чупакан Я.Андерсен /Норвеги/, сăрт-ту çинче йĕлтĕрпе ярăнса çĕнтернĕ А.Милордос /Греци/ чи ăста спортсмен ятне тивĕçеççĕ. Историе кĕрсе юлнă тепĕр ят – Франци фигурисчĕ, вун иккĕри Ален Жиллети. Чи кĕçĕн олимпиец! Ослора вăл çиччĕмĕш кăна пулнă, тепĕр сакăр çултан тĕнче чемпионатĕнче мала тухнă.

Ослори стартсем умĕн пĕр çул маларах Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕ хăйĕн йышне Совет Союзне те йышăннă. Анчах та ăмăртусене хутшăнма пирĕн çĕр-шыв спортсменĕсем 1956 çулта тин пуçланă. Ун çинчен – çитес номерте.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ, спорт журналисчĕ**

# Сильвия Петровăн мулкачне тĕнчипе пĕлеççĕ

***Нарăсăн 7-мĕшĕнче Сочире пуçланакан хĕллехи Олимп вăййисене пурте чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Чăваш Ен те тĕнчери чи пысăк ăмăртăвăн пĕр пайĕ пулса тăчĕ, çакă чăваш хĕрĕн Сильвия Петровăн ячĕпе уйрăмах çыхăннă.***



Сăлтавне пурте пĕлеççĕ: вăл илемлĕ, шурă мулкач ӳкернĕ. 2011 çулта унăн ĕçĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра çĕнтерсе Олимп талисманĕ пулса тăнă. Паян эпир кăна мар, пĕтĕм тĕнче унăн мулкачне пĕлет. Мамăк пек çемçескер, чиперскер кашни çын чунĕнче ăшă туйăм вăратать, хăйĕн пысăк та илĕртӳллĕ куçĕсемпе ырă та çĕкленӳллĕ кăмăл парнелет.



Мĕнле чĕр чун-ха вăл? «Мулкач – хĕллехи вăрманăн хастарĕ. Тусĕсем унран ялан тĕлĕнеççĕ: пур çĕре те вăл мĕнле ĕлкĕрет-ха? Мулкач Вăрман академийĕнче те лайăх паллăсемпе вĕренет, çемьен «Вăрман кӳлли» апатланмăшĕнче те амăшне пулăшать, спорт ăмăртăвĕсенчен те юлмасть. Нимĕнле вăрттăнлăх та çук унăн. Мулкач сывă пурнăç йĕркине пăхăнать тата спортпа туслă, çавăн пекех вăл юрра-ташша питĕ ăста», – çырнă «Сочи-2014» талисманĕ çинчен.

Мулкач авторĕ пирки эпир мĕн пĕлетпĕрха? Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуянкассинче кун çути курнăскер унти тавралăх хӳхĕмлĕхĕпе киленсе ӳснĕ, çавăнпах çут çанталăк ăна ӳнерçĕ ăсталăхне панă. Виçĕ çул каялла ялти вăтам шкулта 11-мĕш класра вĕренекен хĕр шурă хут çине ӳкернĕ мулкач Олимп çăлтăрĕ пуласса шухăшламан паллах. «Унăн сăнĕ ăнсăртран ӳкерĕнчĕ, çапларах е капларах пултăрччĕ тесе тĕлленмен. Кăшт хитрелетнĕ хыççăн копи турăм та конкурса ярса патăм», – аса илет Сильвия. Ун чухне вăл ытти конкурсантпа пĕрле Сочире пулса курнă, вĕсене Йĕркелӳ комитечĕн ертӳçисем тĕрлĕ парнепе чысланă, çавăн пекех Олимпиада уçăлнине килсе курма ирĕк паракан сертификат панă. Тĕрлĕ конкурсра палăрнă тата общество пурнăçне хастар хутшăннă маттур хĕр çав çулах Чăваш Ен Президенчĕн стипендине тивĕçнĕ.

Пĕчĕклех ӳкерме юратаканскер паян та кашни кун аллине кăранташ тытать. Тустантăшне портретсем калăпласа савăнтарать, мультфильмсенчи сăнарсем унăн ӳкерчĕкĕсенче уйрăмах ăнăçлă. Вăл яппунсен аниме мелĕпе кăсăкланнине те пĕлетпĕр. Шăп çавнашкал ӳкерчĕксем кун çути кураççĕ те ĕнтĕ чăвашсем юратса вулакан «Капкăн» журналта. Тĕнчипе паллă мулкача вара хĕр тĕрлĕ енлĕ ӳкерме пултарать: акă шурă чĕр чун шарфпа е шлепкепе, акă йĕлтĕр сырса старта тухас пек, конверт çинче вăл кăвак хăюпа... Хальхи вăхăтра Сильвия Петрова Чăваш патшалăх университечĕн журналистика уйрăмĕнче виççĕмĕш курсра вĕренет. Журналист ĕçне суйласа илнĕ пулин те студентка уйрăмах математика занятийĕсене кăмăлланине палăртать. Çамрăк художник дизайн енĕпе пĕлӳ илме те ĕмĕтленет. Спортпа туслă Тăвай хĕрĕ халĕ «Йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăртăва хутшăнма хатĕрленет. Унтан вăл Сочие çула тухĕ. Çавăн пекех унăн аллинче – тĕрлĕ турнира çитсе курмалли 5 билет. Вăл биатлонçăсен тата конькипе эрешлесе ярăнакансен тупăшăвĕсене курас тĕллевлĕ.

Çак кунсенче И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Андрей Александров Сильвия Петровăпа */сăн ӳкерчĕкре/* тĕл пулнă, Сочие кайса килме телейлĕ çул суннă. Студентка университет музейне Олимп талисманне парнеленĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

# Харăсах – икĕ уяв



***Çĕрпӳ районĕнчи Чиркӳллĕ Ямашри клубра çак кунсенче харăсах икĕ мероприяти иртнĕ: тĕплĕ юсав хыççăн курав залне уçнă тата ентешĕн, Александр Сергеев композиторăн 80 çулхи юбилейне паллă тунă.***

Мероприятие район администраци пуçлăхĕ Сергей Артамонов, Чиркӳллĕ Ямаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Юрий Тимофеев хутшăннă, тĕп хуларан – ЧР Композиторсен ассоциацийĕн президенчĕ Николай Зимин. Композиторăн çывăх тăванĕ Алевтина Васильева та уяв хăни пулнă. Кĕнеке, нота кăларăмĕсен, сăн ӳкерчĕксен экспозицийĕ Александр Сергеевăн пултарулăхĕпе çывăхланма пулăшнă. Тухса калаçакансем те ун пирки ăшшăн аса илнĕ. Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен вокалпа фольклор коллективĕсем композитор тĕрлĕ çулта çырнă произведенисене шăрантарнă.

Аса илтерер: Александр Сергеев 1934 çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче çак районти Чиркӳллĕ Ямашра çуралнă. Çĕрпӳри педагогика, Шупашкарти музыка училищисенчен вĕренсе тухнă.

1967 çулта унăн «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» юрри Чăваш радио конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Ытти çулта çак юррисем çĕнтерӳçĕ пулнă: «Лар, аннеçĕм, юнашар», «Шăмат кун каçхине», «Салтак çырнă çырусем» юрă Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 40 çул çитнине халалланă конкурсра иккĕмĕш премие тивĕçнĕ. «Ма хитре-ши Шупашкар урамĕ», «Каçа юлнă куккук сасси», «Шупашкар хĕрĕсем», «Аннене», «Пĕрре курсах саврăм-ши» юррисем – халăх килĕштерекен хайлавсем.

Александр Сергеевич Чăваш Енри пултарулăх коллективĕсен хормейстерĕнче, дирижерĕнче, аккомпаниаторĕнче 30 çул ытла ĕçленĕ. Унăн произведенийĕсемпе патшалăх театрĕсем лартнă 20 ытла пьесăна илемлетнĕ. Сăмахран, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче – «Тавах, аннеçĕм», «Тип шар», «Атăл куçĕ», «Сар ачапа сарă хĕр» тата ытти ĕçе, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕн театрĕнче – «Салтак амăшĕ», «Пушар лаши» спектакльсене.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Çĕнĕ кĕнеке*

# Чун çирĕплĕхне çухатман...

***Хăйĕн çулĕсене кура мар кашни çулах – Раççейри политика репрессийĕсенче вилнисене асăнмалли кун – Таисия Трускова Шупашкарти Б.Хмельницкий урамĕнчи çăва çинче çав вăхăтра пуç янисене асăнса лартнă палăк патне çитетчĕ, чылай вăхăт пуç пĕксе шăп тăратчĕ. Ахăртнех ăшра та пулин ашшĕпе калаçнă Таисия Федоровна. Çавăн пек тĕл пулусенчен пĕринче вăл каласа пани яланлăхах асра çырăнса юлчĕ.***




Унăн ашшĕ, Федор Гаврилович Адаимов, хăй вăхăтĕнче Сĕнтĕрвăрринчен Атăл тăрăх хулари эрех завочĕ валли спирт турттарнă. Баржăна тăвалла А.Багров катерĕ сĕтĕрнĕ. Пĕр калаçура катер хуçи Федор Гавриловича мăшăрĕ Сĕнтĕрвăрринчи лавккара кукăль туянни, унăн ăшĕ пăсăлни çинчен каласа кăтартнă имĕш. «Манăн атте ун майлă темиçе сăмах хушнă. Сехетренех халăхра «хура çăхан» текен машина хăмаран çапса тунă пирĕн çурт умне çитсе чарăнчĕ. Хуралтă евĕр пӳртре пиллĕкĕн пурăнаттăмăр – атте-анне тата эпир – виçĕ хĕр ача. Икĕ пичче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçатчĕ. Чĕнмен хăнасем пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕç. Илсе каймалли нимĕн те тупаймарĕç. Ним илме çуккипе пиччесен фронтран килнĕ çырăвĕсене, документсене упракан сăран портфеле çаклатса тухрĕç. Анне куççуль витĕр тархасласа ыйтсан та – хăвармарĕç...»

Çакă Таисия Федоровнăн чĕринче ялан ыратакан чĕрĕ суран пек юлнă. Пиччĕшĕсем Бориспа Вячеслав вăрçă хирĕнчен таврăнайман. «Аттене вăрçă вĕçлениччен 9 кун маларах тытса кайрĕç. Ултă уйăхран ăна суд умне тăратрĕç, шăпах çав кун эпĕ урасăр юлтăм. Тăваттăн кăшкăрса макăратпăр. Милиционер пире лăплантарма хăтланать: «Мĕн йĕретĕр? Айăпламалли сăлтавĕ çук вĕт», – чун витĕр тухнă сăмахĕсем ăна кашни кун канăçсăрлантарнине туйрăм. – Тупрĕç çав, 5 çула хупрĕç. Багров тĕрмерен тухаймарĕ. Федор Гаврилович та тĕрме хыççăн нумаях пурăнаймарĕ».

«Тупрĕç çав», – тени ахальтен мар. Шыракан çын куçĕнче те çӳпĕ тупать теççĕ те. Çав вăхăтран хуçаланма тытăннă ахăртнех халăхра анлă сарăлнă «Çынни пулсан – статйи тупăнĕ» каларăш. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-50-мĕш çулĕсенчи ахăр самана – Раççей историйĕнчи чи синкерлĕ страницăсенчен пĕри. Тăван тăванра тăшман тупма тăрăшнă, тăван тăвана сутнă, ашшĕ ывăлĕнчен, ывăлĕ ашшĕнчен хăранă тапхăр: такам çăхавне пула тӳрĕ, таса чун-чĕреллĕ, хастар та пуçаруллă çынсене тустарнă. Кашниех халь-халь килсе илсе тухса каяççĕ тесе сехĕрленсе пурăннă. Çак туйăм ир те, каç та канăç паман.

Сивлек çак «çил» хальтерех Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă «В трагические годы. Репрессированные чувашские писатели, журналисты и ученые» кĕнекен кашни страницинчен «вĕрнĕн» туйăнать. Хăрушсăрлăх органĕсен республикăри ветеранĕсен канашĕн членĕ, отставкăри полковник Валерий Кошкин çак кĕнекене кун çути кăтартса политика репрессийĕнче шар курнă 38 çыннăн сăваплă ятне тавăрчĕ. Çакă – «Буржуалла национализмпа контрреволюци ĕçĕшĕн» тăван республикăран Колымана, Магадана ăсатнă 16 пин те 800 çынран /ку цифра тĕрĕссиех мар, тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – вăл тата пысăкрах/ – культура ĕçченĕсен, çыравçăсен, хуçалăх ертӳçисен, тĕн çыннисен, вĕрентекенсен умĕнче каçару ыйтниех тенĕ пулăттăм. Тĕплĕ ĕçĕн авторĕ ФХС /Федерацин хăрушсăрлăх службиĕ/ архивĕсенче чылай çул вăрттăнлăхра тытнă документсемпе кăна усă курнă. Куç умне сăлтавсăр айăпланă С.Лашман, Н.Шупуççынни, И.Тăхти, Н.Янкас, В.Краснов-Асли, Д.Юман, Г.Вантер, П. тата В.Митта, М.Тинехпи, Тани Юн, А.Милли, А., Ф. тата Я.Турхан, П.Хусанкай сăвăç-çыравçăсен, политика çыннисен, И.Кузнецов ăсчахăн тата ытти вун-вун çыннăн чун çирĕплĕхĕ, тасалăхĕ, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни, этем сăнне вараламанни уççăн тухать.

Валерий Павлович кĕнекен кӳртĕм сăмахĕнче «Пирĕн умра политика репрессийĕсенче шар курнисен е вĕсен çывăх çыннисен чун-чĕрине тепĕр хут ыраттарас е çав вăхăтра хăрушсăрлăх тата право хуралĕнче ĕçленисене хура тĕспе сăрлас шухăш-тĕллев пачах пулман. Хисеплĕ вулаканăм та репрессиленĕ ку е вăл çыравçăн пултарулăхĕнчен писмессине шансах тăратăп. Мĕншĕн тесен вĕсем чăтма çук йывăрлăха чăтса ирттернĕ, пысăк хак тӳленĕ. Кун пек синкер урăх ан алхастăр тесе хăрушă çав тапхăрта айăпсăр асапланнисен аса илĕвĕсемпе документсене халăх умне кăлартăмăр та...»

Валерий Кошкинăн «Синкерлĕ çулсенче репрессие лекнĕ чăваш писателĕсем, журналисчĕсем тата ăсчахĕсем» кĕнеки – тоталитаризм тапхăрĕнче репрессиленĕ çынсен ячĕпе лартнă палăк-кĕнеке.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

реклама пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

*Саламлатпăр*

***Шупашкар районĕн депутатсен Пухăвĕн тата Шупашкар район администрацийĕн ячĕпе Валериан Харитонович ДУБИНИНА 75 çулхи юбилейпе саламлатпăр!***



*Валериан Харитонович! Пурнăçăрăн çур ĕмĕрне эсир обществăпа политика ĕç-хĕлне халалларăр. Республикăра, районта ертӳçĕ тивĕçĕсене пурнăçласа социаллă пурнăçпа экономикăри тĕллевсене çĕнсе илессишĕн ырми-канми тăрăшрăр. Профессири ăсталăхăр, ăнланулăхăр, ĕçĕре чунтан парăнни çамрăк ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Сирĕн пек хастарсем – хамăр районăн кăна мар, республикăмăрăн мухтавĕ те.*

*Пултарулăхăра хакласа Чăваш Республикин вĕренĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне тивĕçнĕ эсир. Педагогикăра пуян опыт пухса ыттисемшĕн яланах çул уçса пынă тата тĕллевлĕн малалла талпăннă.*

*Шупашкар районĕн çыннисем, Чăваш хутлăхĕнче пурăнакансем сире ырă кăмăлăршăн тата пуçарулăхăршăн, ĕçе лайăх пĕлекен тата çирĕп ыйтакан ертӳçĕ пулнăшăн хисеплеççĕ. «Хисеп Палли» орден, Халăхсен туслăхĕн орденĕ, медальсем – республика, район тата общество умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕрсен хисеп-сумĕ.*

*Ĕçри паттăрлăхăр чыс, тивĕç, çынлăх тата ĕренкелĕх хаклавĕ, çак паха енсем çамрăк ăрушăн паха тĕслĕх пулĕç, малашлăх çулне çутатса тăрĕç.*

*Сире çирĕп сывлăх, чун тăнăçлăхĕ тата иксĕлми телей сунатпăр. Шанăçа ан çухатăр, ĕненӳпе пурăнăр.*

*Шупашкар район пуçлăхĕ А.М.ИСАЕВА.*
*Шупашкар район администрацийĕн пуçлăхĕ Г.И.ЕГОРОВ.*

* * *



*Юратнă аттепе анне – Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче пурăнакан КИРГИЗОВСЕМ: Ананий Егорович – 88, Мария Григорьевна – 90 çул тултараççĕ. Сумлă уявсемпе вĕсене чунчĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул сунатпăр. Хаклă çыннăмăрсем! Пире пурнăç тата ăс панăшăн, тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕшĕн сире тав тăватпăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр. Хăвăра упрăр, ан чирлĕр.*

*Ачисем, кĕрĕвĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.*

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, для сельскохозяйственного производства в аренду сроком на 49 лет:
- с кадастровым номером 21:08:090201:249, площадью 8437 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Бикшикское.
Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, село Батырево, пр. Ленина, д. № 5, каб. № 7. Справки по телефону: 8(83532)61426, 6-13-60.

## ПРОДАЮ

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

**17.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, железные двери.** Обшивка вагонкой, пластиком, МДФ. Т. 89050281182.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

## КУПЛЮ

**70.Дом с участком** в любом состоянии. Т. 8-927-667-07-63.

**872.Бычков, коров,** тёлок, овец, **свиноматок.** Т. 8-927-999-37-37.

## РАЗНОЕ

**67.Ищу женщину,** имеющую детей от Алексеева Олега Владиславовича, для вступления в наследство. Т. 89373767644.

«Электроприбор» АУО коллективĕ, директорсен канашĕ, ветерансен канашĕ генеральнăй директорăн çумĕ пулнă Роберт Михайлович Васильевăн мăшăрĕ
**Сталина Петровна**
вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

«Вăрмарти ăратлă кайăк-кĕшĕк фабрики» АУО коллективĕ «Вăрмарти ăратлă кайăк-кĕшĕк фабрики» АУО генеральнăй директорĕн Николай Петрович Петровăн амăшĕ
**Феодосия Васильевна ПЕТРОВА**
вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явапллă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.В.СЕРГЕЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, явапллă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 254.